**Районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕ хĕл умĕн**

# Ĕç кăтартăвĕсене çын тăвать

Вăхăт хура кĕркунне еннелле сулăнма пуçларĕ, çавăнпа иртнĕ уйăхра район шайĕнче йĕркеленĕ комисси хуçалăхсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле епле хатĕрленипе паллашса тухрĕ. Иртнĕ юн кун вара районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕшĕн яваплă специалистсемпе ял хуçалăх производство кооперативĕсен тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертÿçисем пĕрле пухăнса фермăсене çитрĕç, сарайсемпе витесене хĕле епле хатĕрленипе хăйсен ĕçне ыттисемпе танлаштарса хак пачĕç.



**Хамăр районти ĕçсене тишкернĕ пирĕн делегаци Элĕк районĕнчи «Новый путь» хуçалăхăн ĕç кăтартăвĕсемпе паллашать.**

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ – кашни хуçалăх экономикинех тĕреклетмелли çул-йĕр. Выльăхсене ăнăçлă хĕл каçарни хыçĕнче хуçалăхсен экономикин малашлăх утăмĕсем, çĕнĕлĕх пуçарăвĕсем.

Çитес хĕл тапхăрне обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ытти формăллă пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем 7110 тонна утă хатĕрленĕ. Унсăр пуçне фермер хуçалăхĕсем – 755 тонна. Хатĕрленĕ утăн 47 процентĕ (3368 тонна) 1 класлă, 36 процентĕ (2530 тонна) 2 класлă, 17 процентĕ (1209 тонна) 3 класлă. Пысăк пахалăхлă утă Суворов яч. хис. хуçалăхра (86 процент), «Ударник» (75 процент), Чкалов яч. хис. (100 процент), Андреев яч. хис. (66 процент), Ильич яч. хис. (63 процент) нумай хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах виççĕмĕш класлă утă «Свобода» хуçалăхра 53 процент, «Орининора» 29 процент. Хĕле хатĕрленсе районти çĕр ĕçченĕсем 17231 тонна силос хатĕрленĕ. Пахалăхне пурне те тĕрĕслеттернĕ. Пĕрремĕш класли – 6730 тонна (39 процент), иккĕмĕш класли – 9481 тонна (55 процент), виççĕмĕш класли – 1020 тонна (6 процент). Пысăк пахалăхлă силос янтăлассипе кăçал «Передовик», «Свобода» (100 процент) хуçалăхсем лайăх ĕçлерĕç. Сенаж хывассипе те хуçалăхсенче çу кунĕсене усăсăр ирттермерĕç. Пĕтĕмпе çак апата 4192 тонна хатĕрленĕ. Пахалăхĕпе илсен: 1 класли – 560 тонна (13 процент), 2 класли – 3027 тонна (73 процент), 3 класли – 605 тонна (14 процент). Силоспа сенаж хатĕрленĕ çĕрте «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», Суворов яч. хис. хуçалăхсем 100 процентчĕпех консервантсемпе усă курчĕç. Закваскăпа – «Свобода», «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем.

Паянхи кун районти ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕне фермисем 19, сысна ĕрчетмеллисем 17, пĕрре сурăх тата вăкăр самăртмаллипе 3, тынасем ÿстермелли 2 ферма. Кусемпе пĕрлех чăх-чĕп фабрики. Çак сарайсемпе цехсенче паянхи куна 5479 пуç мăйракаллă шултра выльăх (çав шутра сумалли ĕнесем – 2180 пуç), 6966 пуç сысна, 169 сурăх, 149 пуç лаша тата 218800 пуç чăх-чĕп пур. Вăл фермăсенче пуринче те хĕле хатĕрленсе дезинфекци ĕçĕсене пурнăçланă. Сарайсене шуратассине Ильич яч. хис., Суворов яч. хис. хуçалăхсен ĕне фермисенче, «Герой» хуçалăхри ĕне тата сысна фермисенче, «Свобода» хуçалăхăн ĕне ферминче, «Ударник» хуçалăхри ĕне фермисенче çу кунĕсенчех пурнăçланă.





**«Свобода» хуçалăхри сысна ферминче ферма ертÿçипе кунти специалистсен ĕç кабинечĕ хăех кунта технологи дисциплини çÿллĕ шайра иккенне калать.**

Кăçалхи 8 уйăхра туса илнĕ 3874 тонна аш-какай, пĕлтĕрхи шайпа танлаштарсан, 92,8 процент. Çав шутра ял хуçалăх предприятийĕсенче – 1008 тонна кăна (иртнĕ çулхипе танлаштарсан 69 процент). Ку питĕ пĕчĕк кăтарту. Кунта ÿт хушаслăх пирки каласа хăвармалла. Ял хуçалăх предприятийĕсенче 8 уйăхра мăйракаллă шултра выльăхсем 4244 центнер ÿт хушнă пулсан, ку кăтарту иртнĕ çулхинчен 295 центнер сахалрах. Уйрăм хуçалăхсемпе илсен Ленин яч. хис. кооператив 185 центнер, «Оринино» 84 центнер, Чапаев яч. хис. 249 центнер туса илеймен. Кулленхи ÿт хушаслăх 533 грампа танлашнă. Танлаштарма, çак тапхăрта Суворов яч. хис. хуçалăх 627 грамм, «Ударник» 642 грамм, Чкалов яч. хис. 700 грамм ÿт хуштарнă пулсан, Чапаев яч. хис. – 192 грамм, Ленин яч. хис. – 304 грамм, «Сеятель» – 349 грамм кăна.

Сыснасем ерчетес отрасле илес пулсан та районта татса паман ыйтусем чылай. Кунта та аш-какай 3245 центнер туса илни иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 1564 центнер сахалрах. Кулленхи вăтам ÿт хушаслăх кунта 324 грампа танлашать. «Ударник», Суворов яч. хис., «Оринино» хуçалăхсенче ку кăтарту 400 грамм ытла пулсан, Ильич яч. хис., Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче 200 грамм та çук. Ăратлă сыснасем ĕрчетекен Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра та ÿт хушаслăх питĕ пĕчĕк – 250 грамм кăна. Кун пек пулсан хуçалăхри ăратлă сыснасене реклама пама та йывăр. Кун хыçĕнче вара укçа-тенкĕ çулĕ тăрать.

Районĕпе кăçал 51120 тонна сĕт туса илмелле. Çак тĕллевпе пырса ферма ĕçченĕсем 8 уйăхра 33 пин те 350 тонна сĕт сунă. Ку вăл, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 100,3 процент. Çак кăтарту эпир ĕçлеме пултарнине кăтартать, анчах пĕрлешÿллĕ ял хуçалăх предприятийĕсенчи сăвăм 6553 тонна çеç. Тепĕр майлă каласан, иртнĕ çулхи çак вăхăтри хисепĕн 89 процентĕ. Çакăнта сумалли ĕнесен хисепĕ чакнин витĕмĕ те пур. Ĕне кĕтĕвĕ кăçал пĕлтĕрхинчен 461 пуç пĕчĕкрех. Кăçал кăна сумалли ĕнесем Ленин яч. хис. хуçалăхра 59 пуç, «Лидерта» 47 пуç, «Сеятельте» 37 пуç, «Рассветра» 32 пуç, Чапаев яч. хис. кооперативра 25 пуç, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 37 пуç сахалланнă. Апла пулин те пĕр ĕне пуçне сĕт сăвасси ÿснĕ: 2880 килограмм е иртнĕ çулхинчен 209 кг пысăкрах.



**Кăçал çĕнĕ технологипе ĕçлеме хатĕрлесе çитернĕ Кашмашри сысна ферминче продукци илесси çÿллĕ шайра пулнинчен тĕлĕнме кирлех-ши?**

Кашни ĕнерен 3000 кг ытларах сăвас чикĕ урлă «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», Суворов яч. хис. хуçалăхсем каçнă. Кăçал районта кашни ĕнерен 4 пин кг ытла сĕт сума тĕллев пур. Паян районта кашни талăкра ĕнесенчен вăтамран 10,7 кг (пĕлтĕрхинчен 1 кг нумайрах) сĕт сăваççĕ. Çав вăхăтрах Суворов яч. хис., «Ударник», «Оринино», «Передовик», «Герой» хуçалăхсенчи сăвăм 13-11 килогрампа танлашать.

Халĕ выльăхсене хĕллехи рацион çине куçармалли тапхăр пырать. Тырă-пулă тата ытти выльăх апачĕ çителĕклĕ пулнине шута илсе хуçалăхсенче выльăх кĕтĕвне пысăклатмалли пирки шутламалла. 8 уйăхра халăхран 57 пуç мăйракаллă шултра выльăх туяннă. Уйрăммăн илсен, «Восток» – 4, Суворов яч. хис. – 22, «Ударник» – 31 пуç.

Ял хуçалăх пайĕпе районти ветстанци специалисчĕсем сентябрĕн 24-мĕшĕччен графикпа килĕшÿллĕн кашни хуçалăхри фермăнах çитсе курчĕç. Çав тĕрĕслевсенче палăрнă çитменлĕхсене хĕл сиввисемччен пĕтересси – умра тăракан тĕллев. Пĕтĕмлетсе каласан чылай хуçалăхсенчи фермăсенче юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Уйрăммăн илсен, «Восток» хуçалăхри çивĕч ыйту – специалистсемпе ферма ĕçченĕсем çитменни. Апла пулин те кунти фермăсене хĕле хатĕрленĕ. Юсав бригади ĕне сарайĕнче, пăрусен витинче тата сыснасем тăнă çĕрте урайсем улăштарнă. «Передовик» хуçалăх та малалла аталанасси çинчен шухăшлать. Çакна Ахмане фермине реконструкцилени курсан та семинара хутшăннисем ăнланчĕç. Хуçалăх выльăх валли апат та нихăш çулхинчен çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кунта çывăх вăхăтрах 100 пуç ăратлă тынасем илме планлаççĕ. Çапла вара çитес çул «Передовик» хуçалăх сумалли ĕнесен кĕтĕвне 200 пуça çитерес ĕмĕтлĕ.



**«Малашлăх пур-ха», – теççĕ пуян ĕç опычĕллĕ Нина Чаплинапа Нина Петрова зоотехниксем.**

«Оринино» хуçалăхра обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси çине пысăк яваплăх уйăраççĕ. Патаккассинчи ĕне ферминче тирпейлĕх кăна хуçаланни канашлăва çÿрекенсемшĕн хăйне евĕр тĕслĕх пулчĕ. Çав вăхăтрах «Хлебороб» хуçалăхри хĕле хатĕрленес ыйтусем «укçа çук» хуравпах витĕнсе юлас тĕллевлĕ.

Апчар тăрăхпе кÿршĕлле вырнаçнă «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики çултан-çул сулмаклă утăмсемпе аталанса пырать. Çĕнĕлĕхсене тăтăш алла илсе пыракан чăх-чĕп пăхакансем çывăх вăхăтрах кунта 42 пин чĕпĕ вырнаçакан 3 ярусла оборудовани вырăнне 60 пинлĕх 4 ярусла оборудовани вырнаçтарма палăртнă. Кунти территорисен тирпейлĕхĕпе илемĕ ĕçлекен çынна тухăçлă вăй хума хавхалантарать кăна.



**Районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен зооветспециалисчĕсем кашни çĕнĕлĕхех çиччĕ виççе пăхрĕç.**

«Свобода», «Герой» хуçалăхсенче те хĕл тапхăрне тухăçлă ирттерме палăртаççĕ. Ку хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ янтăланă, витесене юсанă.

«Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче пулса курсан кунти витесенчи тасалăх çак хуçалăхсем хĕл кунĕсенче те продукци илессе чакармĕç тесе шутлаттарать. Кашни ферма территорийĕнченех çуллахи тапхăрта тислĕк кăларнă, юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Выльăх-чĕрлĕх ку хуçалăхсенче мăнтăр та илемлĕ, малашлăха шантарать. Вĕсен продуктивлăхĕ те начар мар. Çамрăк выльăхсене 2 хуçалăхĕнче те ытларах «Моргаушкорм» обществăра хатĕрленĕ ЭКД çитереççĕ. Хĕл каçма территорисене пахалăхлă апат-çимĕç çителĕклĕ кÿрсе хунă.

Пач урăхла лару-тăру Чапаев яч. хис. хуçалăхăн Отаркăри сĕт ферминче. Апат-çимĕçĕ 2 çул хĕл каçма çитет пулсан та, пур ÿсĕмри выльăхсем те начар. Кунта 8 уйăхра кашни ĕнерен районти вăтам кăтартуран 1418 кг сахалрах – 1462 кг – сĕт сунă. Çиччĕ виççе пăхмалли çителĕклех.

Пĕр пĕлĕт айĕнче пурăнатпăр пулин те, тĕрлĕрен ĕçлетпĕр. Акă юнашарти Ильич яч. хис. хуçалăх фермисенче пуринче те вăхăтра юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Паха апатпа тăрантаракан ĕнесен продуктивлăхĕ те пĕчĕк мар. Анчах та сыснасемпе ĕçлесси начар пулса пырать-ха. Икĕ çул каялла сысна ĕрчетессине ытти хуçалăхсем унта кайса вĕренетчĕç пулсан, халÿ кунти ÿт хушаслăх 147 грамм кăна. Çитес вăхăтра кунта улшăнусем пуласса шанас килет.

Суворов яч. хис. хуçалăхри фермăсенче кăçал пысăк юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Паян унти витесене кĕрсе тухма та кăмăллă. Халĕ витесене шуратас ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Пур выльăха та пуянлатнă рационпа тăрантараççĕ. Çатракассисем кăçал пĕр ĕне пуçне сĕт сăвассине вăтамран 5 пин килограмран ирттерме палăртни пурнăçланасси пирки никамăн та иккĕленÿ çук. Паян кашни ĕне пуçне тивекен талăкри вăтам сăвăм та вĕсен районта чи пысăкки – 13 кг яхăн. Самăртма хупнă сыснасем те куллен 861 грамм ÿт хушаççĕ.

Ял хуçалăхĕнче çĕнĕ харпăрлăх формисем ăнăçлă вăй илсе пыни те курăнчĕ çак кунхи семинарта. Тĕслĕх вырăнне А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхне илсе пăхар-ха. Кунти юсав ĕçĕсем, выльăх аталантарăвĕ – кулленхи ĕç палли. Нумаях пулмасть çак КФХ «Герой» хуçалăхран ăратлă сысна амисем 73 пуç туяннă. Çитес вăхăтра татах тепĕр 30 пуç туянма плансем пур.

И. В. Черновапа В. П. Павлов фермерсем «Развитие пилотных семейных молочных животноводческих ферм на базе КФХ на 2009 – 2011 годы» программăна кĕнĕ. Çитес вăхăтра патшалăх пулăшăвĕпе усă курса вĕсем фермăсене реконструкцилесе ĕнесен шутне ÿстерес ĕçе кÿлĕнмелле.

Районта иртнĕ семинара хутшăннисем малашлăх ĕмĕтпе ĕçлекенсем пĕр вырăнта ларманнипе паллашма Элĕк районĕнчи «Новый путь» хуçалăха çитсе те курчĕç. Кунти ферма тирпейлĕхĕ, технологипе ĕç дисциплини çÿллĕ шайра пулни, ĕç кăтартăвĕсем пысăкки пирĕн зооветспециалистсемшĕн хăйне евĕр тĕслĕх пулчĕç. Умран апат кайман ĕнесем çу кунĕсенче талăксерен 21 килограмм сĕт пани пире те çĕнĕ технологисемпе чĕлхе çинче çеç мар, производствăра анлăрах усă курма сĕнни пулчĕ теес килет.

Пĕтĕмлетÿ «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕнче иртрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**